26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 АПРЕЛЬ 6 ЫТЛАРИКУН 74(6311) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çуракине хатĕрленес ĕçе çывăх кунсенчех вĕçлемелле

Çуркунне пуçланчĕ. Ака вăхăчĕ çывхарса килет. Республикăри хăшпĕр районсем уйрăм участоксене суйласа илсе клевер акма тытăнчĕç ĕнтĕ.

Республикăри малта пыракан районсемпе колхозсем çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илеççĕ. Вĕсем кирек хăш вăхăтра та хире тухма хатĕр. Сăмахран, Вăрнар районне илме пулать. Ку район çуракине хатĕрленес ĕçе пĕтĕмĕшпех вĕçлерĕ. МТС тракторсене пурне те юсаса лартнă, тĕрĕсленĕ чух тупнă çитменлĕхсене пĕтернĕ те тракторсене участоксене янă. Районри колхозсенче вăрлăх çителĕклĕ. ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарĕсене юсаса хатĕрлесе лартнă. Çураки вăхăтĕнче пĕрлешсе апатланас ĕçе тата ачасен яслисене организацилеме мĕн кирлине пурне те хатĕрленĕ. Апрелĕн 8—10-мĕшсенче районри колхозсем уйрăм участоксене суйласа илсе тĕштырăсем акас ĕçе тытăнма шутлаççĕ.

Анчах республикăри ытти районсенче çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем нумай-ха. Тăвай районĕнче 32 колхозран çуракине 16 колхозĕ кăна хатĕрленсе çитнĕ. Çуракине хатĕрленес ĕçри тĕп çитменлĕх вăл — вăрлăх хывас ĕç чăтма çук вăраха юлса пыни пулать. ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ çирĕппĕн кăтартса панă пулин те, Чкаловски район руководителĕсем колхозсенче вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмаççĕ. Района Заготзерно фончĕсенчен 6.000 центнер вăрлăх улăштарса илме ирĕк панă, анчах вăл 1.664 центнерне кăна улăштарса илнĕ. Вăрлăх хатĕрлес ĕç çавăн пекех Октябрьски, Тăвай, Улатăр, Комсомольски тата ытти районсенче те начар пулса пырать, вĕсем халиччен те вăрлăх çителĕклĕ таран хывса çитермен-ха.

МТС-сен ĕçне тĕрĕслени тракторсемпе вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли инвентарьсене юсас ĕç çителĕксĕр пулса пынине кăтартса пачĕ. Шăмăршă МТС-ĕнче малтан юсаса çитернĕ тесе шутланă 12 трактора комисси хирте ĕçлеме хатĕр мар тесе йышăннă. Çĕмĕрле МТС-ĕнче 24 трактортан комисси пĕрне кăна лайăх тесе йышăннă, ытти 23 тракторĕн тĕрлĕ çитменлĕхсем пур. Пăрачкав МТС-ĕнче 17 трактора халиччен те юсаса лартман. Çак МТС-сенче тракторсенчен кăкарса ĕçлемелли инвентарьсене юсасси те питĕ хуллен пулса пырать.

ВКП(б) Обкомĕпе Совнарком колхозсен ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене юсас ĕçе татăклăнах хăвăртлатма кирли çинчен районсене пĕрре кăна мар кăтартса пачĕç. Анчах хăшпĕр районсен руководителĕсем çак кăтартусенчен тивĕçлĕ выводсем тумарĕç. Ишлей районĕнчи колхозсенче апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне плугсене 42 процент кăна, сеялкăсене 71 процент кăна юсаса çитернĕ. Элĕк районĕнче плугсене 55 процент çеç çураки валли хатĕрлесе хунă. Республикăри нумай колхозсенче урапасене, бестаркăсене тата ут таврашĕсене çураки валли хатĕрлес ĕç çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ.

Халĕ республикăра колхозсемпе МТС-сем çуркуннехи уйхир ĕçĕсене мĕнле хатĕрленсе çитнине пăхса тухас ĕç пырать. Çак смотр çуракине хатĕрленес ĕçри пур кăлтăксене те палăртма тата вĕсене пĕтерме пулăшмалла. Колхозсемпе МТС-сем çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслеме организациленĕ комиссисем хăйсен ĕçне тĕплĕн тусан тата ĕç çине çиелтен пăхмасан кăна вĕсем хăйсен задачине пурнăçа кĕртме пултараççĕ. Анчах вырăнтан пĕлтернисем кăтартса панă тăрăх, чылай комиссисем хăйсен ĕçне çиелтен тăваççĕ.

ВКП(б) Шăхасан райкомĕпе райисполкомĕн представителĕ Петров юлташ ертсе пыракан комисси çак кунсенче «Красное Сормово» колхоза тĕрĕсленĕ те вăл çуракине хатĕрленсе çитнĕ тесе акт çырнă. Çав вăхăтрах ку колхоз вăрлăхсене хатĕрлесе çитермен, вĕсене пĕтĕмĕшпех сортламан. «Канаш» колхозра комисси акт çырса çитменлĕхсене кăтартса панипех лăпланнă, çак çитменлĕхсене пĕтерессишĕн тăрăшман. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнче Спиридонова юлташ ертсе пыракан комисси чылай пысăк çитменлĕхсем тупнă, анчах актра «колхоз çуракине хатĕр» тесе çырнă, хăй палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕнле мерăсем те йышăнман.

Ĕç çине çакăн пек çиелтен пăхнине халех пĕтерес пулать. Тĕрĕслекен комиссисен çуракине хатĕрленес ĕçри пур çитменлĕхсене те палăртмалла, смотр итогĕсене колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕсенче сӳтсе-явмалла, палăртнă çитменлĕхсене пĕтерме колхозниксене мобилизацилемелле. Тĕрĕслекен комиссисен составĕнче ăмăртакан колхозсемпе МТС-сен представителĕсем пулмалла.

Парти райкомĕсемпе райисполкомсен вырăнсенче смотр мĕнле пынипе куллен интересленмелле, ĕçре палăракан çитменлĕхсене вăхăтра пĕтермелле, тĕрĕслекен комиссисен ĕçне оперативлă ертсе пымалла. Çак пысăк ĕç çине ВКП(б) Чкаловски райкомĕн секретарĕ Валеев юлташ пăхнă пек çăмăллăн пăхмалла мар. Валеев юлташ çуракине хатĕрленнине тĕрĕслес ĕç районри колхозсенче мĕнле пыни çинчен пĕлмест, комиссисен ĕçĕпе интересленмест.

Партипе совет тата çĕрĕç органĕсен, ялхуçалăх ĕçĕнчи пĕтĕм работниксен ĕçĕ çуракинче тĕрĕсленет. Çуракине агротехника енĕпе чи лайăх сроксенче тата пысăк пахалăхпа туса ирттересси — çĕршывпа фронт умĕнчи пысăк экзамен пулса тăрать. Халĕ иртекен смотр çуракине ăнăçлăн хатĕрленсе çитме тата ăнăçлăн ирттерме пулăшакан пысăк май пулса тăмалла. Çывăх кунсенчех колхозсенче вăрлăхсене хатĕрлесе çитермелле. МТС тракторĕсемпе колхозсен ялхуçалăх машинисене пĕтĕмĕшпех юсаса лартмалла, çынсене татăклă участоксенче вырнаçтарса тухса çуракине большевикла кĕтсе илессине организацилемелле.

СССР Халăх Комиссарĕсен Советĕнчен

Тамбов облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем 1943 çулхи декабрьте хăйсен перекетлесе хăварнă укçинчен танксен «Тамбовский Колхозник» ятлă колоннине тума Хĕрлĕ Çар фондне 40 миллион тенкĕ пухса парса патриотизмлă ĕç пуçарса яни пирĕн çĕршыври халăхсене çав тери вăйлăн хавхалантарчĕ.

Колхозниксем, рабочисем, служащисем, интеллигенци, красноармеецсем, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн командирĕсемпе политработникĕсем, партизансемпе партизанкăсем, Тамбов облаçĕнчи колхозниксен пуçарăвне йышăнса, 1942 çулхи декабрĕн 9-мĕшĕнчен пуçласа 1943 çулхи мартăн 31-мĕшне çитиччен Хĕрлĕ Çар фондне мĕнпурĕ çичĕ миллиард та хĕрĕх пĕр миллион та виççĕр çирĕм пин тенкĕ укçа хыврĕç. Çав укçана ĕççыннисем хăйсем ыйтнă тăрăх пирĕн çĕршывăн çар хăватне малалла ӳстерес ĕçе, самолетсем, танксем, артиллери тата боевой карапсем тăвас ĕçе янă. Кунсăр пуçне Хĕрлĕ Çар фондне хаклă йышши япаласем тата ялхуçалăх продукчĕсем питĕ нумай хывнă.

Хĕрлĕ Çар фондне укçа пухса хывни СССР-ти ĕççыннисен совет патриотизмне питĕ уçăмлăн кăтартса пачĕ.

КОЛХОЗНИКСЕМ ТĂРĂШСА ĔÇЛЕÇÇĔ

Паянхи кун тĕлне пирĕн хамăра кирлĕ ялхуçалăх машинисем пурте юсавлă. Вăрлăх та çителĕклĕ. Ана лайăх сортласа тасатнă, шăтарса пăхнă. Çавăн пекех минераллă удобренисем те эпир кирлĕ чухлех хатĕрлерĕмĕр.

Пирĕн колхоз членĕсем пур ĕçе те активлăн хутшăнаççĕ. Уйрăмах вăрман хатĕрлевĕнче пример кăтартса ĕçлерĕç. Кăсал эпир 1.877 кубла метр вутă хатĕрлесе, плана 200 процент тултартăмăр тата 600 кубла метр ытла турттартăмăр. Çак ĕçре И. Пиксельмкин, Калашников, И. Вастушкин, К. Андреева, Е. Ваструшкина, Д. Углева нормăсене 150-шар процент тултарса пычĕç.

Халĕ эпир лашасене кантарма тăратрăмăр. Вĕсем валли апат çителĕклĕ хатĕрленĕ.

С. Долгов,
Çĕмĕрле районĕнчи «Вперед» колхоз председателĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 3-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 3-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Апрелĕн 2-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсенне войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 25 автомашинăран кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 2 складне сирпĕтсе янă, тăшман пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă е вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем йышăннă рубежсем çинче çирĕпленсе тăнă тата тăшманăн пемелли хатĕрĕсене пĕтерсе пынă. Пирĕн артиллери тăшманăн 9 блиндажне аркатса тăкнă, 2 оруди тата 20 пулемет пĕтерсе тăкнă. Пĕр участокра блиндажра пытаннă нимĕçсем пулеметран персе тăрса пирĕн подразделенисене малалла каймa чăрмантарса тăнă. Автоматчик Сабитов юлташ çав блиндаж патне шуса çитнĕ те граната ывăтнă. Тăшманăн пулемечĕ вара пеме чарăннă.

* * *

Изюмран кăнтăртарахра пирĕн чаçсем оборонăллă çапăçусем туса пынă. Пĕр участокра нимĕçсем мотопехота полкне тата 20 танка наступлени янă. Совет подразделенийĕсем вирлĕн персе тăнипе гитлеровецсен атакине сирсе янă, вĕсене пысăк çухатусем кӳнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, тăшманăн 300 çити салтакпа офицер вилсе пĕтнĕ. Нимĕçсен 5 танкне тата хăй тĕллĕн çӳрекен 7 орудине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белгород районĕнче танксен пĕр соединенийĕ Çурçĕр Донец урлă каçмалли вырăна хӳтĕлекен нимĕçсене сасартăк атакăланă. Тăшман оборонине таптаса, танкистсем нимĕçсене пĕр йĕркесĕр каялла чакмалла тунă. Лейтенант Глонтий юлташ, механик-водитель сержант Попов юлташ тата лейтенант Путинцов юлташ каçă патне чи малтан пырса çитсе, нимĕçсен хăй тĕллĕн куçса çӳрекен икĕ туппине пĕтерсе тăкнă та пирĕн пехота подразделенийĕсем пырса çитиччен çав каçса хăйсен аллинче тытса тăнă.

* * *

Кубань çинче пĕр соединенин боецĕсем наступленилле çапăçусем туса пырса Прикубанский ятлă халăх пурăнакан пункта йышăнса илнĕ. Çав пунктшăн пынă çапăçура нимĕçсен 3 орудине, 6 минометне тата гитлеровецсене 250 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Тытса илнĕ трофейăсем хушшинче темиçе пулемет, винтовкăсем, минăсем тата патронсем нумай.

* * *

Вилейка облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен «Железняк» ятлă отрячĕ мартăн 26-мĕшĕнче халăх пурăнакан пысăк пунктра тăракан нимĕç гарнизонне ăнăçлăн пырса тапăннă. Партизансем тăшманăн 210 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă тата полиципе жандармери управленине аркатнă. Тăшман гарнизонĕнчи хĕçпăшала тата апат-çимĕçсен 2 складне тытса илнĕ. Боевой задание пурнăçланă хыççăн партизансем нимĕнле çухатусем тумасăрах хăйсен базине таврăннă.

* * *

Иртнĕ çулхи çуллапа кĕркунне нимĕç обывателĕсем репродукторсем патĕнче ларса Сталинград парăнни çинчен васкавлăн пĕлтернине кашни минутăрах кĕтнĕ. Вилнĕ нимĕç салтакĕн çумĕнче паллă мар çын çырнă çырăва тупнă. Вăл çырура çапла калать: «Лимбахри хаçатра икĕ эрне каярах «Сталинград парăнас умĕн темиçе сехет малтан» тенĕ фотоӳкерчĕксем пичетлесе кăларнăччĕ, анчах васкавлă пĕлтерӳ ун çинчен халĕ те çук-ха». Пауль Геллер фельдфебельрен унăн ашшĕ-амăшĕсем çапла ыйтса янă: «Сталинград хăçан парăнать-ха? Эпир пурте çавна кĕтетпĕр, мĕншĕн тесен вара эпир те лăпланаттăмăр».

Сталинград парăнни çинчен васкавлăн пĕлтернине илтес вырăнне нимĕçсем Сталинград патĕнче нимĕçсен 6-мĕш армине пĕтерсе тăкни çинчен хыпар илчĕç, савăнас вырăнне — пĕтĕмĕшле траур пулса тăчĕ. Тăшман тылĕ йынăшма пуçларĕ. Герберт Штиллер фельдфебель патне Ганновертан çапла çыраççĕ: «...Сталинград çинчен çав тери усал хыпар килнĕ хыççăн йывăр шухăш пире пăрахмасть. Пуçа тĕрлĕ хăрушă шухăшсем кĕреççĕ.» Петер Шютцендер салтак патне Дортмундран çапла çыраççĕ: «Вăхăтсем питĕ улшăнчĕç. Пулмалла марри пулса тăчĕ. Сталинград патĕнче пулнисем пурте е вилсе пĕтнĕ е вырăссен аллине тыткăна лекнĕ. Пирĕн ĕç пĕтĕмпех путланчĕ». Паллăмар нимĕç салтакĕ патне çапла çыраççĕ: «Сталинград патĕнче хупăрласа илнисене пĕтĕмпех пĕтерни çинчен паян пĕлтерчĕç. Ку калама çук хăрушă япала. Гюнтер Цернехаль те çавăнтах юлнă. Пурте хуйхăраççĕ, ăçта пăхатăн, пур çĕрте те çынсем макăраççĕ. Малалла тата мĕн курмалла пулĕ-ши?» Фрида Циммерман хăйĕн упăшкине Евгений Циммермана çапла пĕлтерет: «...Пирĕн ялта та халăх питĕ хумханать, мĕншĕн тесен кунтан темиçе çын Сталинградра пулнă. Малашне тата мĕн пулĕ-ши?». Гюнтер Шрейбер унтер-офицер патне Мюнхенран çапла çыраççĕ: «6-мĕш армие пĕтерсе тăкни çинчен пĕлтернине ĕненес килмест. Çак кунсем хушшинче нумайăшĕ темиçе çуллăха ватăлчĕç. Радио каланине итлес килми пулчĕ. Германи вăрçăра çĕнтересси путланчĕ тесе шутлаççĕ ĕнтĕ».

* * *

Франци патриочĕсем Руанра Германие рабочисем илсе каякан нимĕç бюровне аркатса тăкнă. Французсем пур списоксемпе документсене те пĕтернĕ. Хирĕç тăма хăтланнă гитлерла чиновниксене вĕлерсе пĕтернĕ. Париж çывăхĕнчи авиаци заводĕнче взрыв пулнă. Пĕр цех пĕтĕмпех арканнă. Тулузăра Франци железнодорожникĕсем 3 паровоза сиенленĕ. Лионри партизансем нимĕç гаражне унта пулнă автомашинăсемпе пĕрлех çунтарса янă.

Апрелĕн 4-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 4-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем тăшманăн 8.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Иртнĕ эрнере, мартăн 20-мĕшĕпе апрелĕн 3-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче тата тăшман аэродромĕсем çинче нимĕçсен 124 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 73 самолет пĕтнĕ.

* * *

Апрелĕн 3-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Хура тинĕсре пирĕн авиаци тăшманăн пĕтĕмпе 13.000 тонна водоизмещениллĕ 3 транспортне, 2 баржине тата 2 торпеднăй катерне путарнă.

* * *

Изюмран кăнтăртарахра пирĕн войскăсем оборонăллă çапăçусем туса пынă. Иртнĕ кунсенче ăнăçу тăвайман пирки тăшман çапăçăва моторизованнăй пехотăн 3 батальонне тата 20 танк кĕртсе янă. Нимĕçсен наступленине авиацин пысăк вăйĕсем пулăшса пынă. Оборонăллă хаяр çапăçусенче пирĕн чаçсем гитлеровецсен атакисене пурне те сире-сире пăрахнă. Вилнисене кăна шутласан та, тăшманăн 1.000 салтакпа офицера çити пĕтнĕ. Нимĕçсен 9 танкне çунтарса янă тата 30 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 5 самолетне персе антарнă. Кунсăр пуçне тăшманăн 2 самолетне пирĕн зенитнăй артиллери персе ӳкернĕ.

* * *

Белгородран çурçĕр-хĕвеланăçнерехри районра вырăнти çапăçусем пулса пынă. Пĕр участокра пирĕн подразделени 2 кун хушши пынă çапăçура гитлеровецсен пĕр ротине çити пĕтерсе тăкнă. Летчицăсем Тамара Памятных тата Рая Сурначевская кĕçĕн-лейтенантсем тăшманăн темиçе бомбардировщикне атакăланă. Тамара Памятных нимĕçсен 2 бомбардировщикне персе ӳкернĕ. Памятных юлташăн самолетне çапăçура персе тивертнĕ пулнă, анчах вăл хамăр территорие вĕçсе çитсе парашютпа ăнăçлăн аннă. Летчица Суначевская юлташ, пĕччен юлнă пулин те, çапăçма пăрахман, тăшманăн тата тепĕр 2 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем хăйсен рубежĕсем çинче çирĕпленсе тăнă тата разведка туса пынă. Артиллери тата пехота персе тăнипе нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 34 блиндажне тата 10 дзотне аркатса тăкнă.

* * *

Кубань çинче пирĕн чаçсем наступленилле çапăçусем туса пынă. Пĕр соединенин боецĕсем, тăшман вăйлă хирĕç тăнине сирсе ярса, халăх пурăнакан пĕр пункта пырса кĕнĕ те урамра çапăçаççĕ. Пĕр кун хушшинче 4 оруди, 8 миномет тата нимĕçсен 250 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Витебск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ март уйăхĕн вĕçĕнче тăшманăн карательнăй отрядне хирĕç хаяррăн çапăçнă. Çав çапăçусенче партизансем гитлеровецсен ăнăçсăр кĕрешекен карательнăй экспедицине пулăшма васкавлă пынă Себежри гарнизонăн икĕ батальонне аркатса тăкнă. Вилнисене кăна шутласан та, нимĕçсен фашистла захватчикĕсем çав çапăçусенче 1.000 ытла салтакпа офицер çухатнă. Партизансем нумай трофейăсем тытса илнĕ. Витебск партизанĕсен пĕр ушкăнĕ Витебск—Полоцк чугунçулăн пĕр участокĕнче нимĕçсен çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Крушени пулнипе паровоз тата 19 вагонпа платформа арканса кайнă.

* * *

Хĕрлĕ Çар пырса çапнипе каялла чакакан нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Смоленск облаçĕнчи Королевка ялне тĕппипех çунтарса янă. Королевкăна пырса кĕнĕ пирĕн боецсем унта кĕл куписем тата кăмрăкланса кайнă çын виллисем нумай тупнă. Чĕрĕ юлнă пĕртен пĕр колхозница Дарья Гусакова нимĕçсен фашистла çынçиенĕсен тискерле ĕçĕсем çинчен çапла каласа панă: «Каялла чакас умĕн нимĕç чунилеĕсем Королевка халăхне хăваласа пухса тĕрлĕ ушкăнсене уйăрнă та персе пăрахма тытăннă. Гитлерла çынвĕлеренсем ялти çынсене нумайĕшне пӳртсене хăваласа кĕртсе çурчĕсене вут тĕртнĕ. Çунакан çуртсенчен тарса тухма хăтланнă çынсене пере-пере пăрахнă. Пĕр кун хушшинче тискерсем пирĕн ял çыннисене пурне те асаплантарса вĕлернĕ е çунтарса янă.

Нимĕç авиацийĕ Ростов районне тапăнма хăтланни

Çак кунсенче нимĕç самолечĕсем икĕ хутчен Ростов районĕ çине массăллăн вĕçсе пырса тапăнма хăтланнă. Пирĕн истребительсем тата зенитнăй артиллери нимĕç самолечĕсене сапаласа янă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе тăнипе нимĕçсен 35 бомбардировщикне персе ӳкернĕ. Пирĕн 10 самолет пĕтнĕ.

Клевер акаççĕ

Енер Тăвай районĕнчи «Сталь» колхоз 40 гектар, «Красный Октябрь» колхоз 10 гектар, Чапаев ячĕпе тăракан колхоз 40 гектар çине клевер акнă

ФРОНТОВИКСЕН ÇЕМЬИСЕНЕ ПУЛĂШАÇÇĔ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Фронтовиксен çемьисене тата эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çемьесене пулăшмалли вунăкунлăхра Янкассинчи пуçламĕш комсомол организацинчи комсомолецсем тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсен çемьисем валли тата эвакуаци йĕркипе килнĕ çемьесене пулăшма 61 пăт çĕрулми, 45 çăмарта, 2 тир, 8 килограмм тăвар, çу, чăкăт пухрĕç.

Н. Виноградов.

КОНЦЕРТ ЛАРТСА ПАЧĔÇ

Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ пирĕн чаçе килсе концерт лартса пачĕ. Композитор Лукин, композитор Лебедев, солистсем Агакова, Козбола хăйсен пултарулăхĕпе боецсене савăнтарчĕç. Пирĕн фронтри боецсемпе командирсем чăвашсен юрăпа ташă ансамбльне концерт лартса пама малашне тата килме ыйтрĕç.

Лейтенант М. Корнилов.

ВКП(б) ШУПАШКАР ГОРКОМĔН ПЛЕНУМĔ

ВКП(б) Шупашкар Горкомĕн III-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Парти Обкомĕн XIV-мĕш пленумĕн ĕçĕсем çинчен ВКП(б) Горкомĕн секретарĕ Романова юлташ доклад туса пачĕ.

Хулари парти организацийĕ хуллен кăна ӳсет-ха. Партин 44 пуçламĕш организацийĕ 1941 çултанпа партие пĕр çынна та илмен. Пир-авăр фабрикипе чăлха фабрикинчи, торф предприятийĕнчи, Наркомфинри, Çыхăну управленийĕнчи парторганизацисем çак çулăн пĕррремĕш кварталĕнче парти речĕсене ӳстерес ĕçе пăрахнă. Партие уйрăмăнах рабочисене сахал илеççĕ: 1943 çулхи виçĕ уйăх хушшинче 22 рабочие çеç илнĕ.

Парти организацийĕсем комсомол организацийĕсене ертсе пырас ĕçе вăйсăрлатнă. Комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксене политикăллă воспитани парас ĕçе начар йĕркеленĕ. ВЛКСМ-ăн хулари организацийĕ начар ӳсет.

Подсобнăй хуçалăхсемпе хула çумĕнчи колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен каласа, докладчик çак ĕçре нумай çитменлĕхсем пуррине кăтартса пачĕ. Чебторгпа кирпĕч завочĕн подсобнăй хуçалăхĕсем тивĕçлĕ кондициллĕ вăрлăх хатĕрлесе çитермен-ха, парник хуçалăхне хатĕрлесе хуман, ĕç вăйĕ çителĕклĕ таран тупма тăрăшмаççĕ. Колхозсенче туртăм вăйĕ начар.

Доклад тăрăх 7 çын сăмах тухса каларĕç. Пирĕн заводри парторганизаци çителĕксĕр ӳснин сăлтавĕсенчен пĕри вăл,—тет Полукаров юлташ,—нумай коммунистсем малта тăракан çынсене партие илессине хăйсен обязанноçĕ тесе шутламанни пулса тăрать. Хăшпĕр коммунистсем çулталăк çурă хушшинче партие кĕме пĕр çынна та рекомендаци паман.

Обкомăн XIV-мĕш пленумĕ хыççăн эпир партие илес ыйтупа ытларах ĕçлеме тытăнтăмăр, — тет Брикер юлташ.—Пленум пулса иртнĕренпе партие 12 çынна илтĕмĕр, вĕсенчен 8-шĕ рабочисем. Эпир комсомолăн пурнăçĕпе те ытларах интересленме тытăнтăмăр. Юлашки икĕ уйăх хушшинче пирĕн ВЛКСМ организацийĕнче 72 çын хутшăнчĕ. Анчах та çак ĕçре пирĕн çитменлĕхсем те пурха, вĕсем çинчен докладчик тĕрĕс каларĕ. Çав çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлетпĕр те ĕнтĕ эпир.

Петрушова юлташ (Водосвет) электростанцири комсомолецсен ĕçĕсем çинчен каласа парать. Комсомолецсем пăхăр пухаççĕ, ĕç вырăнне таса тытассишĕн кĕрешеççĕ, бюллетеньсем кăлараççĕ, пĕр-пĕрин хушшинче социализмлă ăмăрту сарса янă, ВКП(б) историне вĕренеççĕ. Çакă вăл парторганизаци комсомол организацийĕн ыйтăвĕсемпе лайăхрах ĕçлеме тытăннин результачĕ пулчĕ.

Подполковник Баркан çар чаçĕсенчи партипе комсомол организацийĕсем хăйсен ретне ӳстерес тĕлĕшпе мĕнле ĕçленипе паллаштарчĕ.

Пренисенче подсобнăй хуçалăхсене çуракине хатĕрлес тата уйрăм çынсен пахчисене организацилес ыйтусем çинчен нумай каларĕç.

Пленумра ВКП(б) Обкомĕпе Горкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл хулари парти организаци умĕнче тăракан практикăллă задачăсем çинче чарăнса тăчĕ. Парти руководителĕсем, уйрăмах хулари пысăк заводсенчи организацисен руководителĕсем, малта тăракан çынсене ВКП(б) ретне илес тĕлĕшпе, çамрăк коммунистсене идейăпа политика енчен воспитани парас тĕлĕшпе, комсомол организацийĕсене куллен конкретно пулăшса пырас тĕлĕшпе хăйсем ĕçлемеççĕ. Çак ĕçе тӳрлетес пулать. Ленин—Сталин партине тивĕçлĕ çынсене активлăн суйласа илес пулать, çак питĕ кирлĕ ĕç çине çиелтен пăхма юрамасть. Комсомол организацийĕсене парторганизаци секретарĕсен хăйсен ертсе пымалла, çак ĕçе вĕсен хăйсен заместителĕсене хушмалла мар. Руководитель-коммунистсен чи лайăх комсомолецсене партие кĕме рекомендацисем хăюллăнрах памалла. ВЛКСМ организацине ӳстерес ĕçе, пуринчен ытла чи лайăх производственниксене илсе ӳстерес ĕçе, пур майпа та лайăхлатмалла, комсомол членĕ пулас текенсене политика тĕлĕшпе экзамен тыттарассине пăрахмалла. Чарыков юлташ тата предприятисемпе учрежденисен подсобнăй хуçалăхĕсене тата уйрăм çынсен пахчисене çуракине организованно хатĕрлесси çинчен каларĕ.

Парти Обкомĕн XIV-мĕш пленумĕн решенийĕсене чăсрах пурнăçлас тĕлĕшпе пленум конкретнăй мероприятисем палăртса хăварчĕ.

М. И. КАЛИНИН

Йăлтах тăшмана çĕнтерме

Çирĕм икĕ уйăх хушши ĕнтĕ совет халăхĕ нимĕç фашисчĕсене хирĕç хаяр та юн тăканакан вăрçă туса пырать. Кун пек вăрçа тĕнче халăхĕ чухне курман-ха. Гитлерпа унăн ушкăнĕ Совет Союзне хирĕç «çиçĕмле вăрçă» туса ирттерме, урăхла каласан, вăрçа чи кĕске вăхăтра вĕçлеме каппайса ĕмĕтленнĕ.

Анчах иртĕхсе кайнă тăшман вусĕнчен совет халăхĕ, пирĕн Хĕрлĕ Çар çирĕппĕн пырса çапрĕç. Вăрçă пуçланнăранпа Гитлер ĕнтĕ нимĕçсен фашистла çарне катастрофă тĕссĕнчен çип çинче кăна тăрса юлнине икĕ хутчен ирĕксĕрех йышăнчĕ: пĕрремĕшĕнче ку вăл—Мускав патĕнче, иккĕмĕшĕнче—Сталинград патĕнче пулнă. Сталинград патĕнче поражени тӳснĕ хыççăн Гитлерăн çарне çăлса хăварнă çав çип Мускав патĕнче поражени тӳснĕ хыççăнхинчен чылай çинçерех пулнĕ тесе хăшалтарă эпĕ. Паллах, виççĕмĕшĕнче вăл тӳсĕмĕ, Германи çарĕ, тивĕçлипе туянса, хăй чавса хунă çăва шăтăкне вăркăнĕ.

Совет Союзне хирĕç çиçĕмле вăрçă туса ирттерес теннине ниепле те тухмарĕ. Вăрçă вăраха кайрĕ, çапăçакан çĕршывсенчи халăхсене халран яракан вăрçă пулса тăчĕ. Гитлер халĕ ĕнтĕ çак вăрçăра халăхсене ывăнтарса халран янипе çĕнтересшĕн, урăхла каласан, нимĕç командованийĕ Германишĕн питех те ăнăçлă мар тесе, çĕнтерме вара—май çук та пекех тесе шутланă вăрçăра çĕнтерме ĕмĕтленет.

Мĕн çине шанса тăрать-ха халĕхи вăхăтра Гитлер? Вăл çакăн çине шанать: тотальнăй мобилизаци туса ирттернипе мĕнпур оккупациленĕ Европăна çаратма, çакăнпа вара хăй çарне чылаях арканнă материальнăй чăрне тӳрлетме, çынсене ăста май килнĕ çĕртен пухса вĕсене Германи çарĕн ретне яма шутлать. Нимĕçсен нервисем хăйсен противникĕсен нервисенчен çирĕпрех пулĕç тесе, пирĕн материальнăй положени çавăн пек нумай вăй хурса кĕрешессине тӳсеймĕ тесе шутлать Гитлер.

Гитлер—акăн вылярĕ. Малтанхи вăхăтра унăн ĕçĕ ăнăçлă пулса пынă, анчах та Совет Союзĕ çине ултавлăн килсе тапăнни кунранпа вара унăн тĕлĕ ытларах та ытларах ĕнсе пырать. Нимĕçсен çарĕсем часчасах йывăр лару-тăрăва, катастрофăлла лару-тăрăва та кĕре-кĕре ӳке пуçларĕç. Çавăн пек лару-тăруран тухма майсем шыраса, гитлерла заправиласем хăйсен авантюризмне ытларах та ытларах палăртаççĕ. Гитлер тума хапсăнакан авантюрăсене пĕрне те пурнăçа кĕме памалла мар. Пирĕн Хĕрлĕ Çарăн геройлăхĕпе паттăрлăхне пула, ăна лайăх ертсе пынине пула, фашистсен çиçĕмле вăрçă туса ирттерес ĕмĕтне истори алăкĕ хыçĕнчи çӳп-çап купи çине кăларса ывăтнă.

Икĕ çула яхăн тенĕ пек ĕнтĕ татти-сыпписĕр çапăçусем пыраççĕ, хамăрăн Хĕрлĕ Çара халăх мĕн кирлине пурне те татти-сыпписĕр тата çителĕклĕн парса тăрать. Нимĕçсем вăрçă вăрçма кирлĕ материалсене оккупациленĕ çĕршывсене çаратса пухаççĕ. Каламалли те çук, Европăра пур тĕрлĕ материалсен те пысăк запасĕсем пулнă, халĕ ĕнтĕ вĕсене чылай пĕтернĕ тата нимĕçсем çаратнă. Вăраха кайнă вăрçă çĕнĕрен тăвакан пуянлăхсемпе кăна тăранма пултарать, çĕршыври пĕтĕм халăхран çавтери нумай вăй хурса ĕçлеме, пурнăçра перекетлĕ пулма ыйтать. Фронта мĕн кирлине пурне те туса парас тĕлĕшпе пирĕн халăх нумайĕшне турĕ, çĕнтерĕве алла илессишĕн вăл татах та ытларах тăвĕ.

Гитлер Ленинграда выçăхтарса вĕлерме ĕмĕтленнĕччĕ, ĕç тухмарĕ. Совет çыннисене выçă хăварма хапсăнса, вăл нимĕç аттипе Дон тата Кубань тăрăхĕсенчи чаплă тырпулсене таптаса пĕтерчĕ. Çакă ăна хакла ларчĕ. Нумаях та пулмасть пирĕн пиçсе çитнĕ тулăпа кукуруза хирĕсене таптанă, сад пахчисене пĕтерсе тăкнă, çуртсене çунтарнă, пирĕн хĕрарăмсемпе ачасенчен мăшкăлланă тата вĕсене вĕлернĕ нимĕç салтакĕсен çĕршер пин виллисем халĕ ĕнтĕ эпир каялла тавăракан уйхирсенче йăваланса выртаççĕ. Совет çыннисен хаярлăхĕ татах та ытларах ӳсет. Тăшмана курайманни шăла çыртса, совет çыннисем татах та вăйлăнрах, тухăçлăнрах ĕçлеççĕ.

Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем, ялти комсомол, пĕр сăмахпа каласан, пионерсем патне çитиччен пурте, хăйсем вăя хĕрхенмесĕр ĕçлеме пĕлнине, çапла вара тăван çĕршывшăн кĕрешме пĕлнине уççăнах кăтартса пачĕç. Эпĕ иккĕленместĕп, кăçалхи çуркунне те колхоз уйхирĕсенче ытларах тырпул акса хăварĕç, мĕнпур ĕçсене хăвăртрах та лайăхрах туса ирттерĕç. Çавна тумалли майсем те кăçал ытларах пур. Чи кирли вара çакă: халăх вăййинче, пĕр нăрхаланмасăр, татăклăн çакна ăнланчĕ—нимĕç çине совет халăхĕн мĕнпур хăвачĕпе тапăннăçа, нимĕçе фронтра тата партизансен пульлипе çеç мар, тырпул тухăçлăхне ӳстерме, тырпул, çĕрулми, пахча-çимĕç хисепне ӳстернипе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе, уйрăмах тухăçлă пулса тăракан тата ĕçлекен çынсемпе Хĕрлĕ Çар боецĕсене çу пуман паракан çынсене ĕретесессине лайăхлатнипе çапмалла нимĕçе. Уйхирсенче работниксем çине çĕршыв умĕнче, фронт умĕнче çантерн пысăк ответлăх ӳксет, вĕсем хăйсен умĕнче тăракан задачăсене тĕплĕн пурнăçа кĕртме тивĕçлĕ.

Коллективлăн тата уйрăмшерĕн пахчасем тăвас тĕлĕшпе сарăлса пыракан движени халĕ питĕ те пысăк вырăн йышăнать. Вăхăтсене тĕрĕс тăма пуçланине уйрăмах палăртма кирлĕ тесе шутлатпăр. Пысăк мар çĕр лаптăкне те тĕрĕс ĕçлесе акмалла пулгаракан кашни çын çав çĕр лаптăкне çимĕç паракан тума тивĕçлĕ.

Пирĕн рабочисем хушшинче пысăк патриотизмпе тата çĕрн геройлăхне кăтартса пачĕç. Урăхла пулма та пултараймасть, мĕншĕн тесен фашизмпа рабочисен каторга урапи çумне сăнчăрласа лартма, вĕсен юнне тăрне тăктарса ĕççыннисене асаплантаракан хусасен—ĕççĕр аптăракан çĕтĕрĕнчĕсен ушкăнне туса хума хапсăнать. Фашизм хăй çĕнтерсен мĕн кĕрессине рабочисем ăнланаççĕ, çавăнпа та вĕсем хăйсен умĕнче хĕрхĕмсĕр ĕçлеççĕ, анчах çакăнпа çырлахса лармасăр, çĕнтересе илнĕ результатсемпе çырлахса лармасăр юранаммаĕç. Тăшман пирĕн çĕршыва кашнине тăрать-ха, вăл пирĕн халăхăн юнне çăткăнăн ĕçет, çынкăн карланкине тупăсем, снарядсем, бомбăсемпе пульăсем кăна пăкаласа лартма пултараççĕ. Хĕçпăшал мĕн чухлĕ лайăхрах тăватпăр тата вăл Хĕрлĕ Çар боецĕсен аллинче мĕн чухлĕ нумайрах пулать, тăшман çĕнтересешĕн çавăн чухлĕ сахалтарах вĕлерме пултарать. Пирĕн çурт пĕтĕм тĕнчери бандит иртĕхне пултаракан вырăн маррине вăрă-хурахла тапăнма юратакансене кăтартса памалла.

Пирĕн ывăнма пĕлмесĕр, тĕплĕн те пĕркелĕн ĕçлемелле, ĕç майĕсене тăтăшах лайăхлатса пымалла. Ку, паллах, çар промышленноçĕ кăна мар пырса тивет. Тĕрĕссипе илсен, хальхи вăхăтра çаршăн ĕçлемен промышленность çук та. Хуçалăхăн мĕнпур отраслĕсене илсе пăхăр-ха, эсир кунта çакна куратăр: вĕсенчен кашни вăрçă тĕлĕшпе мĕнле те пулин вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа та промышленноçăн кирек мĕнле отраслĕ умне лартакан требованисем те, тӳрремĕнех çар промышленноçĕ умне лартакан требованисем пекех çирĕп пулмалла.

Хальхи вăхăтра директорсен, главнăй инженерсен, конструкторсен, цех начальникĕсен, мастерсен, технологи процесне сăнаса пыракан çынсен ответлăхĕ уйрăмах пысăк. Ĕçе май килнĕ таранах çăмăллатас тата лайăхлатас тесе, ĕç тухăçлăхне ӳстерес тесе, технологи процесне тăтăшах лайăхлатса пырас тесе, мĕн кирлине вĕсем пурне те тума тивĕçлĕ. Тăван çĕршыва хӳтĕлессишĕн ĕçлекен творчествăллă шухăш çăлкуçĕ пек тапса тăмалла.

Пур çĕрте те перекетлĕ пулни, ĕç тухăçлăхне ӳстересси пекех, кирлĕ, çакна ăна заводсемпе фабрикăсен работникĕсем, складсемпе магазинсенчи работниксем уйрăмах асра тытса тăма тивĕçлĕ. Нумайĕшĕсем перекетлĕх çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаççĕ, çав вăхăтрах перекетлĕх халăхăн пĕтĕмĕшлĕ ресурсĕсенче питех те кирлĕ средствăсен çăлкуçĕ пулса тăрать.

Нимĕç фашисчĕсем чăтăмлăх тата вăй-хăват тĕлĕшпе виçĕ çĕршывпа: Совет Союзĕпе, Англипе тата Америкăпа тавлашса пăхма шутлаççĕ. Хăйсен тĕп вăйĕсене вĕсем пире хирĕç яраççĕ. пирĕн хуçалăха аркатма, пирĕн çарăн пуçарулăхне хавшатма, халăхсен кĕрешӳри çирĕплĕхне хавшатма шутлаççĕ.

Гитлерăн çиçĕмле вăрçăпа ĕç тухмарĕ, çавăн пекех вăраха пыракан вăрçăра та унăн ĕç тухмасть. Совет çыннисем нимĕç фашисчĕсене хамăрăн çĕршывран хăваласа кăларас тĕллев лартрĕç; кĕрешӳри нимĕнле йывăрлăха пăхмасăрах нимĕçсене эпир çапса аркататпăр, вĕсене совет çĕрĕ çинчен хăваласа кăларатпăр. Çакна тума пирĕн халăхăн чăтăмлăхĕпе вăйĕ çитет, боецсен—çапăçури ăсталăхĕ, çарсене ертсе пыракансен—ертсе пырас искусстви çитет.

Фашистла оккупантсене вилĕм!—текен пĕтĕм халăх йыхравĕ пурнăçа кĕрет.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

11. Хаярлăх ӳсет

Çиллĕ-тăвăллă,. урнă çанталăк,
Йĕп чиксен курăнми тĕттĕм каç, —
Кун пек чух вĕçеймест нимле кайăк,
Йăваран та тухма хăяймасть.

Каç тени тем пек ырă пулсан та
Сахал кайăк вĕçет-çке çĕрле.
Анчах пилĕк моторлă гигантăн
Пурпĕрех, пурпĕрех вĕçмелле.

Чараймасть ăна чăрсăр çанталăк,
Ана вутлă хаярлăх чĕнет.
Пирĕн паттăр Орлов — ăмăрткайăк
Тăвать хăйĕн хăюллă ĕçне.

Тĕтре витĕр, мазут пек каç витĕр,
Çăмăр çунă чухне шарлатса,
Орлов кирлĕ çĕре вĕçсе çитĕ,
Ĕçе кĕртĕ çапах приказа.

Тăшмана пуçĕпех аркатмасăр
Çурма-çул — унăн тивĕçĕ мар.
Темĕнле тăвăлран та вăл харсăр,
Темĕнле çиçĕмрен те хаяр.

Çăхансем пур енчен хупăрлаччăр,
Çапăçать вăл, тухать, çăлăнать.
Хăй учителĕн вилĕмсĕр ячĕ
Çутатать ун çулне яланах.

Сывлăшра алă вăйĕ пĕтет-и,
Аманать-и гигант — аппарат.
Унта паттăр Гастелло çитет те
Орлова вăхăтра вăй парать.

Куç умне сĕмсĕр вилĕм тăрсан та,
Пур çĕрте те Гастелло пĕрле.
Пĕринче Орлов акă ăсанчĕ
Хăй ĕçне яланхи пек çĕрле.

Фашистсен йăвине ку расра та
Арпаштарчĕ Орлов тĕпренех.
Анчах ун пĕр моторĕ сасартăк
Вăйлăн тытăнчĕ тем кисренме.

Çывăхрах снарядсем çурăлаççĕ,
Улăпа çулăм хумĕ силлет.
Тĕп пулма та пулать, ыйăхла çеç. —
Хăвăртрах кил енне вĕçмелле.

Анчах ваннă мотор ӳссăр грузăн
Улăпа çĕреллех сĕтĕрет.
— Çирĕплен, паттăрлан, улăп тусăм,
Хамăр çĕр çинелле çитерех!

Çакна акă Гастеллăмăр курнăн
Орлова вăйпа шанчăк кӳрет.
Хăйĕн самолетне вăл фронт урлă,
Ӳкиччен, каçарса ĕлкĕрет.

Çак машина — вăл пулнă Гастеллăн,—
Çавăнпа, тем пулсан та, ăна,
Куç умне тухса тăтăр хăть вилĕм,
Сан пама юрамасть тăшмана.

Çук, вĕçевçĕ ăна пăрахмарĕ;
Вăл ăна хăвăртрах юсаса,
Черетри вĕçĕве тухса кайрĕ,
Елкĕртме черетри приказа.

Вĕç, вĕçевçĕ, хăюллă юлташăм,
Машину улталамĕ сана.
«Голубая двойка» — тăшманшăн
Тӳперен кӳрет вилĕм кăна.

Кĕçĕр пирĕн разведка пĕлтерчĕ:
Нимĕçсем пĕр тӳлек станцире
«Хурçă чăмăр» пухса хатĕрлеççĕ,
Систермесĕр çапасшăн пире.

Станцине эшелон çитсе ларнă,
Бензин хатĕр ыран нимĕçсен.
Çитсе çап-ха, Орлов, вут-кăварлăн,
Аça-çиçĕмĕн çит эс вĕçсе.

Приказ илнĕ Орлов. Уншăн паллă:
Питĕ йывăр задача умра.
Çапмалла çĕрпеле танлашмаллăх
Хурçăран пухнă çав «чăмăра».

Тухса кайрĕ Орлов каçа хирĕç,
Станцине çитрĕ шăп тĕттĕмле.
Кĕтсе илчĕ ăна хайхи нимĕç
Пĕртте кăмăллă мар темелле.

Ирсĕр нимĕç йăлтах урса кайрĕ,
Вăл пуçларĕ татах вут хăсма.
Анчах пирĕн те пур-çке хаярлăх,—
Мĕншĕн вут çине вут такас мар!

Пĕрре кĕчĕ, кĕчĕ вăл иккĕ —
Орлов хăйĕн «тĕллевĕ» çине.
Эшелон ав чун кĕнĕ пек сикрĕ,
Çулăм сапăнчĕ шăп тӳпене.

Ме, тăшман! Çулăм санăн тусу вĕт,
Хăв эс килтĕн вутпа чи малтан.
Акă халь тапса тухрĕ Везувий
Аслă çĕр ăшĕнчен, чи шалтан.

Тӳперен Орлов пăхрĕ мăнаçлăн
Хăй хускатнă Везувий вутне.
Ĕнтĕ кăмăлĕ унăн вырнаçрĕ
Ĕнтĕ турĕ вăл хăйĕн судне.

Пăхса çаврăнчĕ летчик вăрахăн:
Хăш таран саралать чăрсăр вут?
Анчах ку таврăну каçĕ мар-ха,
Ĕмĕр пырĕ хаяр таврăну.

Кун пек тамăк халь пуле пин хут та,
Тăшман хăй шырать çав тивĕçе.
Ирхине хайхи пирĕн пехота
Пырса çапрĕ кунта нимĕçе.

Фашистсен çапла шăпăр бензинсă
Тăрса юлнă тискер танкĕсем
Пулаймарĕç чарусăр та сĕмсĕр,
Вырăнтах вĕсем ларчĕç сĕнксе.

Тăшмана боецсем сирсе ячĕç,
Танксем лекрĕç пирĕн алла.
Тăван халăх ывăлĕн ячĕ
Фронта сарăлчĕ вут-çулăмла.

Янăра, пирĕн аслă хăюлăх,
Çиçĕмле ывтăн нимĕç çине!
Çапла паттăр чăваш — çĕнĕ улăп
Парать хăйĕн сатур сассине.

(Малалли пулать).

Малалли. Поэма 61-мĕш номертен пичетленме пуçланă.

КОЛХОЗСЕМ ÇУРАКИНЕ ХАТĔРЛЕНСЕ ÇИТНИНЕ ТĔРĔСЛЕТПĔР

Тĕрĕслӳ мĕн кăтартрĕ

ÇĔМЕРЛЕ. (Хамăр корр.). Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем ялхуçалăх ĕçĕсенче иртнĕ çулта районра пуринчен малта пычĕç.

Колхозниксем кăçалхи çуракине те тĕплĕн хатĕрленнипе кĕтсе илеççĕ. Ăна çак кунсенче çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухни те лайăх кăтартса пачĕ. Колхозăн пур вăрлăхсем те çителĕклĕ тата лайăх пахалăхлă, вĕсем тĕплĕ кĕлетсенче выртаççĕ. Шăтарса пăхнă тăрăх сĕлĕ, хуратул, çурхи тулă 92—100 процент шăтаççĕ. Ялхуçалăх машинисене юсаса çитернĕ, хăмăт, ĕнерчĕк, урхалăх тавраш ĕсем кашни лаша пуçне 1,5 комплекта яхăн тивеççĕ, урапасем те кашни лаша валлиех пур.

Колхоз ĕç планне тунă. План тăрăх çураки ĕçне 5 кунта вĕçлемелле. Кам хăш бригадăра, звенора ĕçлемелли паллă, лашасем çителĕклĕ, халĕ вĕсене кантарма тăратнă.

Уйри ĕçсем пуçлансан, агитаторсемпе беседчиксем те хăйсен ĕçне уя куçараççĕ. Ку ĕçе камсем туса пымаллине халех палăртса хунă. Слепов, Якунина, Тимошин, Брегман, Когина, Ежов, Юхтанова юлташсем—агитаторсем.

Колхоз членĕсем кăçал хăйсем умне пĕлтĕрхинчен ытларах тырпул туса илес задача лартрĕç. Çĕре çемçетес тесе уя 2 пин тонна тислĕк кăларчĕç, 100 центнер кĕл тата 26 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухрĕç. Ку. ĕç сарăлсах пырать.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз хăйĕн акмалли çĕр лаптăкне çулран çул аслăлатса пырать. Кăçал та вăл, йывăç тĕмисемпе тымарĕсене кăклаcа, çĕре 10 гектар аслăлатма палăртать.

— Çĕршывпа фронта ытларах та ытларах тырпул кирлĕ. Ăна пирĕн колхозниксем лайăх пĕлеççĕ. Çавăнпа эпир тухăçлă тырпул туса илессишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлетпĕр,— тет колхоз председателĕ Ежов юлташ.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Вăйлă тырпул туса илесси çуракине тимлĕн хатĕрленсе кĕске вăхăтра туса ирттернинчен килет. Çакна «Прогресс» колхоз членĕсем лайăх ăнланнă.

Колхоз кăçал тырăсене ытларах сеялкăсемпе тата яровизацилесе акать, сеялкăсемпе акма çынсем уйăрнă, кашни 11 ретлĕ сеялкăпа талăкра 4-шар гектар тырă акма палăртнă.

«Прогресс» колхозăн кăçал вăйлă тырпул туса илме пур майсем те çителĕклĕ. Çĕрулми, купăста, выльăх кăшманĕсем тата техникăллă культурăсем акмалли вырăнсене апатлама колхоз 54 центнер фекалие тислĕкпе хутăштарса компост тунă, 75 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрленĕ, 80 центнер кĕл пуçтарса хунă. Кусемсĕр пуçне колхоз уя 2.234 центнер тислĕк кăларнă, икĕ тонна фосфорит çăнăхĕ кӳрсе килнĕ.

Колхозниксем вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе «Новая сила» колхоз членĕсемпе ăмăртаççĕ. Вĕсем хăйсем умне кăçал кашни гектартан 16 центнер тырă, 20 центнер махорка туса илме задача лартнă. Çураки планне тунă. Ĕç вăйне вырнаçтарса тухнă.

С. Шадин.

Çитмен вăрлăхсене кивçен илеççĕ

Апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне Комсомольски районри колхозсем çуркунне акмалли тырăсен вăрлăхĕсене 96 процент çеç уйăрса хунă. Çавăнпа та ВКП(б) райкомĕпе райçĕрĕç пайĕ тĕрĕслӳ комиссийĕсене ку тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕн ĕçлеме хушрĕç.

Вăрлăх мĕн чухлĕ хатĕрлесе хунипе комиссисем тĕплĕн интересленеççĕ, ку ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме конкретнăй мероприятисем йышăнаççĕ. «Янка Турмыш» колхоз правленийĕ вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемен. Тĕрĕслӳ комиссийĕ кăтартнă хыççăн колхоз правленийĕ çывăхри колхозсене вăрлăхпа пулăшма чĕнчĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех «Янка Турмыш» колхоза 9 колхоз кивçенле вăрлăхлăх тырă пачĕç.

Пуринчен ытла пăрçа вăрлăхĕ çитмест. Правительство пăрçа вăрлăхне Вăрнарти «Заготзерно» пунктĕнче улăштарса илме ирĕк панă пулсан та, Комсомольски районри колхозсем çак ĕçе хăйĕн вăхăтĕнче тăваймарĕç. Çапла халĕ акма пăрçа вăрлăхĕ 500 центнера яхăн çитмест. Мĕн тумалла-ха ĕнтĕ? Районри 7—8 колхозра иртнĕ çулта туса илнĕ пăрçана халĕ те çапса пуçтарман. Вăл колхозсенчен хăшпĕрисем халь пăрçана алăпа шĕкĕлчеççĕ, ку ĕçе çуркуннехи каникулта пулнă шкул ачисене анлăн хутшăнтарнă. Анчах та çапла майпа кĕске вăхăтрах 500 центнер вăрлăх хатĕрлеме çук. Комиссисем ку тĕлĕшпе колхозсенче вăйлă ĕçлеççĕ. Пăрçа вăрлăхне колхозниксенчен кивçенле пухтараççĕ, Вăрнарти пунктран турттарса килмелли майсем шыраççĕ, çавăн пекех тата çапман пăрçана май килнĕ таран алăпа нумайрах шĕкĕлчессине организациленĕ.

А. Алексеев.

Ют çĕршывсенче

АНГЛИПЕ ГЕРМАНИ ХУШШИНЧИ СЫВЛĂШРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, Англи авиацийĕ апрелĕн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Эссен хули çине вĕçсе пырса вăйлăн тапăннă. Çав операцирен 21 самолет таврăнман.

Америкăн йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Париж хĕрринче вырнаçнă Рено завочĕсене вăйлăн тапăннă.

Тăшманăн 7—8 самолечĕ ĕнер Кăнтăр Англири хуласенчен пĕрин çине бомбăсем пăрахнă, пулеметсенчен пенĕ. Вилнисем пур. Хулари пурăнмалли кварталсене сиенленĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ЭССЕНА ТАПĂННИ ÇИНЧЕН ТĔПЛĔНТЕРЕХ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Эссена апрелĕн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле вĕçсе пырса тапăннă вăхăтра хула çине 900 тонна бомба пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе Крупăн çар завочĕсене çĕнĕрен нумай аркатнă.

Операцин пĕр тапхăрĕнче Эссен çине кашни минутăрах икĕ тонна туртакан ултшар бомба ӳкнĕ. Вĕçсе пырса тапăннă хыççăн çур сехетрен хула çинче питĕ вăйлă тĕтĕм хăпарнă.

ЖЕНЕВА, апрелĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Германи командованийĕ Берлинра официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англи бомбардировщикĕсем Эссена тапăннипе пула хулана чылай сиен тунă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ САРДИНИ УТРАВНЕ ТАПĂННИ ÇИНЧЕН ТĔПЛĔНРЕХ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Информаци министерстви çапла пĕлтерет: мартăн 31-мĕшĕнче Америкăн «Вĕçекен крепость» йышши 100 бомбардировщикĕ Сардини утравне тапăннă вăхăтра бомбăсем 26 судно çине тĕл ӳкнĕ.

Промышленноçлă района, пристань районĕнчи çĕркăмрăк склачĕсене тата чугунçул çинчи ремонт мастерскойĕпе ытти объектсене те атакăланă. Икĕ аэродромра çĕр çинче ларнă 56 самолета сиенленĕ е пĕтерсе тăкнă.

ЮГОСЛАВИ ПАРТИЗАНĔСЕН АНĂÇЛĂ КĔРЕШĔВĔ

ЖЕНЕВА, апрелĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен килнĕ хыпарсем тăрăх, Боснире кĕрешекен партизансен пысăк отрячĕсем Гламоч хулине тепĕр хут йышăнса илнĕ. Партизансем Невесине хули патĕнчен пуçласа Горажда хули патне çитиччен 150 километр тăлкăш фронтра çапăçаççĕ. Партизансен малти отрячĕсем Дрина шывĕ хĕррине çитсе Фоча хули патĕнче хаяррăн çапăçаççĕ.

Партизансем Коницхули патĕнче çапăçни тăшмана аркатса тăкнипе вĕçленнĕ, тăшман вара Неретва шывĕн сылтăм енне чакса кайнă.

Темиçе эрне хушши ĕнтĕ партизансем Загреб-Сплит чугунçулĕ çинчи Грагац хулипе чугунçул станцине хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Оккупантсем хулана тытса илес тесе хăтланни пĕтĕмпех путланса ларнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Водосвет хулари гражданcене çакăн çинчен пĕлтерет: шыв колонкисенчен тата çурга кĕрtнĕ водопроводран шыв илекен çынсем шывшăн укçа тӳлемен пулсан тата вĕсен абонент кĕнеки çук пулсан, апрелĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа вĕсене шыв пама чараççĕ. Шывшăн тӳлемелли 1942 çулхи парăма тата 1943 çулхи пĕрремĕш кварталшăн тӳлесе татмалла, абонент кĕнеки çук пулсан, абонент сĕтелĕнче (Ленин урамĕ, 19) кĕнеке илмелле.

Абонент кĕнекисем илме пынă граждансем хăйсемпе пĕрле домовой кĕнеке тата шултăра выльăх тытнипе тытманни çинчен урам комитетĕнчен справка илсе пымалла.

Çул тăвакан машинăсемпе тата тракторсемпе ĕçлеме вĕрентекен курса вĕренме илеççĕ, вĕренессе пĕр уйăх таран вĕренмелле.

16 çултан кая мар çитĕннисене тата 4 çултан кая мар вĕреннисене илеççĕ. Вĕренекенсене уйăхне 150 тенкĕ стипенди, общежити параççĕ тата столовăй пулать.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Калинин урамĕ, 51, кадрсен пайĕ. 9 сехетрен пуçласа 18 сехетчен пĕлме пулать.

Çавăнтах тата старши экономист, главнăй бухгалтерсем тата бухгалтер-ревизорсем кирлĕ.

3—3

Организацисемпе учреждениcене пурне те пĕлсе тăма

СССР Наркомфинĕ 1943 çулхи февралĕн 5-мĕшĕнче 72-мĕш номерлĕ хутпа кăтартса панă тăрăх, 1943 çулхи майăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр Чăваш АССР-ĕнчи учрежденисен, организацисен тата предприятисен тивĕçлĕ финанс органĕсенче хăйсен штачĕсене, ĕçукçи фончĕсемпе ставкисене тата администрацила хуçалăх сметисене регистрацилемелле.

Регистраци СССР Наркомфинĕ 1941 çулхи мартăн 31-мĕшĕнче (№ 246/36) кăларнă инструкци тăрăх пулса иртет.

Наркомфин.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 135 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.